„Канаш“ хаçат çумĕнђе тухаў.



Ийуђ, 1926 ç 12-мĕш № 2-мĕш çул тухаў.

ТИРПЕЙЛĔХ.

Пĕр йалта копперататтăр пуранна, Вăг çав копперататтăра ђи аслă кĕпĕрнере ђĕнеççĕ те, калаççĕ:

— Иулташ, еккономи кирлĕ, тирпейлĕх. Кашни пус укçанах сыхласа усра, ахалĕн пирĕн мăрйе виттĕр вĕçсе тухмалла пулаў.

Ну, копперататтăр, маттурскер, итлерĕ. Килне таврăнаў те, шухăшлаў:

— Ђăнах та ĕнтĕ вăл, укçа тени вăл шута йуратаў.

Тавайха, еккономи пултăр тесе, прикашђăксăр ĕçлесе пăхам: çу вăхăтĕнђе хам та прикашђăк вырăнĕнђе ĕçлесе пыма ĕлкĕрĕпха.

Прикашђăкне кăларса йађĕ.

Прикашђăкĕ ахаљ çыннах пулман, ђапла çын: вулĕçтăвком претçетаттĕлĕпе ратнеллĕ пулнă.

Претçетаттĕл копперататтăр çине çавăншăн çиленнĕ.

— Ну, тет, кăтартăпха епĕ сана ман ратнесене вырăнтан кăларса еккономи тума.

Копперататтăр ђарăнма пĕлмест. Татах еккономисем тăваў.

Ун патне йађейккă çекреттарĕ пынă:

— Кĕтесле тавар памăнши?

Копперататтăр:

— Иурамасў! Сан кăсйунта ахаљ те копперататси укçи çĕр тенкĕ çўрет. Парăмна пар, вара парăп, тет.

Çекреттар йатлаçса мĕн тăмарĕ.

— Иураў. Сан тирпейлĕхне еп манмăпха, терĕ.

Копперататтăршăн пулсан нимĕн те мар. Хăрамасў.

Ун патне ревиçи комиççи хăнана пыраў, кăлпассисене шăршласа пăхаў, йўççи çинелле пăхса ђĕлхисене çуласа илет. Вăл вĕсене хăналамасў те, кулса анђах тăраў.

— Ман, тет, пурте йĕркеллĕ. Ыттисем пек пуçлăхсене хăналас тĕлĕшпе тăкак мĕн кăларса тăмастăп.

Мĕн тетĕн ес?

Çав копперататтăра вырăнтан сирпĕтсе кăларђĕç кăларђĕçех, вĕт.

Çийĕнђен тата ун çинђен протоккол çырса лартрĕç.

— Еккономи тума пĕлменшĕн вырăнтан кăларса йатăмăр.

Ахаљ мар çав ваттисем каланă:

— Тирпейлĕхĕ вăл пултăр, анђах пуçлăхсене хисеплеме ан ман.

ПРО КОФИЕВ.

Вӗренни—ҫутӑ

Йал ҫынни вӑл тӗттӗм йапала, Мӑнкун каҫ ҭухнехи пек, мӗншӗн тесен вӑл куҭттурӑ мӗнне пӗлмест. Мӗн вӑл куҭттурӑ тесе ыйтсан унтан, вӑл темиҫе сехет шухӑшласан та, хирӗҫ таварса калаймӗ. Стало пыт̆, вӑл хут вӗренмен, ман пек мар. Еп, хӑт̆, нумай мар та, ҫапах вӗреннӗ ҫын—ликвитаттӑр шкулӗнҭе пӗрик уйӑх вӗреннӗ, Совет влаҫӗпе. Малтанах вӗренес килмесҭӗ, арӑм пирки. Уп ҭухне епӗ, тӗнҭере тӑр пӗҭҭен пурӑнма хурлӑхлине кура, арӑм илме шухӑш тытнӑҭӗ. Авланакан ҫынна хут вӗренни килӗшмест мӗншӗн тесен, стало пыт̆, вӗренекен ҫынна пӗҭӗк, айван аҭа шутӗнҭе шутлаҫҫӗ. Кам вӗренет? Паллах, ухмах ҫын, ӑслӑ ҫын вӑл вӗренмесӗрех ӑслӑ. Ак, лашанах илер. Лаша тени вӑл тыха ҭухне, соснани ҫук пирки, суха тума пӗлеймест, ӑна вӗрентес пулат̆. Вӗрентсен вӑл куҭттурлӑ пулат̆ те, краштанин шутне кӗрсе ӑсланса ӗҫе вӗренет. Ҫапла шухӑшлакаласан, авланассине пӑхмасӑрах, вӗренме шут тытрӑм. Вӗрентӗм те халӗ хаҫатра ӗҫлекенсем пекех ӑсланса мӑнкӑмӑлланса карӑм та вӗренин уссине тӗпӗ йерипех пӗлсе ҫитрӗм. Еп пӗлменни хаҭ нимӗн те ҫук. Пур кӗкеке ҫинҭе ҫырнисене те пӗлетӗп, вулас пулат̆ анҭах. Пӗр славенла анҭах пӗлместӗп, мӗншӗн тесен ликвитаттӑрӗ, комунис пулнӑ пирки, славен ҭӗлхине вӗрентмерӗ. Славен ҭӗлхи вӑл сӗрӗм тет, ҫӗрӗмпе епӗр кӗрешетпӗр. Сӗрӗм вӑл ҭӑнах та тӗттӗмлӗх. Халӗ ҫутӑлнӑрӑнпа мана пӗре те сӗрӗм тивмен, потому што епӗ халӗ, стало пыт̆ ҫӗнӗ ҫын. Ҫӗнӗ ҫынна пурӑнма лайӑх ӗнтӗ. Ак, епӗ ҫырма—вулас тӗлӗшпе куҭттурлӑнӑранпа тӗрлӗ ҭӗлхесем вӗрентӗм,—йут патшалӑх ҭӗлхисене мар, йуг патшалӑхра пуршуйсем пурӑнаҫҫӗ, йумӑҫ ҭӗлхисене ҫырса илсе вӗрентӗм.

Халӗ ӗнтӗ епӗ инкек-синкек пуласран, старый решим ҭухнехи пек, хӑрамастӑп. Пӗрпӗр ҫын хама хӗнесен, йе еп хам ҫынна хӗнесен сута каймалла пулсан, сут ҭӗлхи пӗлетӗп. Пессоснаттӗлност пирки алла ҫӗҫӗ кассан, каллех ҭӗлхе пӗлни пулашат̆. Арӑмран йӑлӑхсан, ҫӗнӗ арӑм илес тесен, каллех пуҫ ҫаварма пулат̆... Хут вӗренни пур ҫӗрте усӑллӑ. Ак, например калӑпӑр, Шупашкара кайатӑп. Йуг хула. Ӑҫта пивнойсем пуррине пӗлместӗп. Леш вывӗски ҫинҭи саспаллисене вулатӑп та, тӳрех тупатӑп. Ӗлӗк пулсан, соснаттӗлнӑҫт̆ ҫук пирки, тупас ҫук. Тата тапак илмелли пулат̆и унта. Каллех куҭттурлӑ пулни пулӑшат̆. «Ҭервонӗс» тапак хуҭӗ ҫинӗ «ҭервонӗс» тесе ҫырнӑ.—усламҫи улталас тесен, те улталаймӗ, мӗншӗн тесен, стало пыт̆, вӗренни—ҫутӑ.

Ҫутӑ пирки, куҭттурлӑ пулнӑранпа ҫак епӗ пӗрре ҫеҫ улталантӑм. Ӗҫӗ, стало пыт̆, ҫапла пулҭӗ.

Пӗрре епӗ самакункӑпа кӗрешес тесе, русски корки ӗҫрӗм. Ӗҫни нумайрах пулҭӗ пулмалла, мӗншӗн тесен, стало пыт̆, кайран ҫӑвартан тухма пуҫларӗ наопорот. Пырат̆ӑп респуплӗкпа (Шупашкарпа). Йара патӑм паспа йурпа:

«Ӗҫетпӗр те ҫийетпӗр, ниҫта намӑс курмастпӑр»... Хӗрлӗ милитсионер пырат̆ те: мӗн ес тишина и спокойствие, тет. Тытрӗ те левӑй сторонти хулӑран вӗҫтере паҭӗ путоҭник патнелле. Прттакол ҫырҭӗҫ. Мӗнле йурӑ йурларӑн, теҫҫӗ. Еп тӳрипех каларӑм, пӗр вӑтанмасӑрах.

Ҭово потелӑш? Пӗрик ернерен штрав килҭӗ. Виҫӗ тенкӗ, советски укҫа. Манӑн урӑх йурӑ йурламалла пулнӑ мӗн, ҫӗннине. Ҫапла епӗ, несосвани елемевт пек, улталантӑм. Ҭово потелӑш? Хут пӗлни вӑл... тӗнҭе пӗлни. Тӗнҭе пӗтсен анҭах хут пӗлни кирлех пулмӗ, тетӗп.

ЙӐВАН-МУҬИ.

ПИРӖН АКРОНОМСЕМ.

„Йӗпреҫ хулинчи акроном труйски кунӗ хӑй пӳрт умне йӑвӑҫсем лартса тухнӑ „Вӑрман кунӗ“ ҫывӑрат.

(Хыпартан).



Акроном: „Вӑрман кунӗ“ чухне йӑлтах манса кайнӑ йӑвӑҫ лартма. Халӗ хӑй, каснӑ йӑвӑҫсенӗ те пулин, лартса тухас пуҫ...

Налок ҫписки туса ҫӳренӗ чух.

— Ваҫили пичче, санӑн шултӑра майракаллӑ выҫӑх пури?

— Ҫук.

— Мӗнле ҫук. Иккӗ те пурҫке?

— Пурри пур та, вӗсем иккӗш те майракасӑр. Майраксисем хуҫӑлнӑ.

АВАҪ.

Тӗн сӗрӗмӗпе кӗрешекен.

— Сирӗн турра хирӗҫ пыракан йачейкки мӗншӗн ӗҫлемест?

— Ара, турри ҫук та... Ҫук турӑпа кӗрешсе чӑрманас мар, тетпӗр.

Çитăр Ваçли ерех ĕçме пăрахни.

Çитăр Ваçли ţĕлĕмне вайлăрах ĕмсе илţĕ те, ţĕлĕмĕ çĕлен пек шăхăрса йăвăрăн сывлама тытăнţĕ— кăмăлсăр пулţĕ пулмалла, унтан Ваçли çăвара пуханнă сурţăкĕсене лăţ сурса пăрахрĕ те, сулахай аллипе сухал пĕрţисене йакаткаласа пирĕн çинелле пăхса илсе тытăнţĕ йерипен хăй ерех ĕçме пăрахни çинţен тăнлантарма:

— Арăм, аţам-пăţамсем, мана ерех тутлăн ан туйăнттăр тесе, турра та молепĕн туса пăкнă, йумăça та ţупкаланă, анţах усси каţа пÿрни тăришĕ те пулман. Арăм таçтан Ишекри Микул турă ерех пăрахтарма пултараţ тенине илтĕ те, мана вăйпах Ишеке ţуптарţĕ. Кайас килместţĕ, анţах арăм, Ишеке каймасан çăкăр та памастăп терĕ те, иглерĕм. Каймаллăх укçа пултăр тесе, икĕ сурăх, путекки мĕнĕпех, сутрăмăр (арăм сутрĕ). Сурăх сутнă укçана шаларах ţикрĕм те, арăм пилленипе, уттара патăм Ишеке.

Çулĕ инçе. Икĕ кунтан тин çитрĕм. Çитрĕм те, ţиркÿне питĕрнĕ пулнă. Ыранţен кĕтмелле. Ыран тăк ыран, мана пурĕ пĕр!

Пĕр шĕвĕр сухаллă ţăваш патне хваттере кĕтĕм. Хваттертисем ыйтаççĕ:

— Мĕнле хуйхăпа килтĕв? Арăму вилţи мĕн, теççĕ.

— Арăм марка, ерех... Ерех пăрахма тесе килтĕм. Арăм йаţĕ те...

Лах-лах лах кулса йаţĕç.

— Каласа парăрха, тетĕп вĕсем кулса тăрансан, сирĕн Микул турă мĕне йуратарах параţ. Мĕн парсан çырлахаţ?

— Есĕ çапла ту, теççĕ хваттер хуçи ывăлĕсем.—Кĕçĕр çĕрĕпех ĕç. Ан сывăр. Ерех пăрахас пулсан ÿсĕр пуçпа ţиркÿве кĕрсе 3 пуслăх çурта лартса тухаççĕ анат йенţи ţăвашсем. Санăн та çаплах тумалла. Çуртине лартас умĕн çитмĕл те çиţĕ хутţен çĕре ÿксе пуççапатăн. Кашни пуççапмассĕрен—хăтар мана урă турă ерехрен, тесе йăлăнатăн. Анţах пĕлми ÿсĕр пулас пулаţ, унсăрăн ерех пăрахаймастăн, терĕç.

Микул турă хăй патне ÿсĕрпе пынине йуратаţ пулсан, йураţ.

Усĕрлме пултаратпăр.

Ну, ĕçрĕмĕр вара хваттер хуçисемпе! Пĕр çĕр ĕçрĕмĕр. Еп ţăтаймасăр çывăрса кайнă. Каллех тепĕр çĕр ĕçмелле пулţĕ. Виçĕмĕш кунне аран, йулашки укçана ţаксе, Микул турра çырлахтарма карăм. Хам ÿсĕр. Аран утатăп.

Кĕтĕм те ţиркÿве, пуççапса тăрапţĕ. Йурлакансем пит савăнăçлă йурласа йаţĕç. Еп ташласах йатăм. Ташлатăп, йурлатăп:

«Ĕçетпĕр те çийетпĕр,
Ниçта намăс курмастпăр»...

Ţиркÿре тăнине те манса кайнă, ухмах. Унţен те пулмарĕ икĕ сторожрах çын пыţĕç те, тапратрĕç мана çылăхласкере ĕнселеме. Ţышкисем пысăк—пĕре парсан ţĕренех пырса тивеççĕ. Ĕнселесех ţиркÿрен кăларса йаţĕç.

— Ну, мĕнле? Пăрахрăни вара ерех ĕçме? тесе ыйтрăмăр унтан.

— Пăрахрăм çав. Анţах ун ţухнех мар, кайрарахран. Ишекрен таврăнсан, килтисем килте çук пулнă пирки, вĕсене шырама кÿрше карăм. Кÿршĕре те никам та çук. Ĕçес киле-ет. Вилес пекех. Шкапра кусен ерех пулакантĕха тесе, шкапне уçса пăхрăм та, шкапĕнţе ерех кĕленţи лараţ. Ерехĕ те пур. Тытрăм та йанклаттара патăм. Ţĕре патнех карĕ. Татах çукши тесе шкапалла пăхса тăратăпţĕ, кÿр-

шĕ арĕм пыҫĕ тăҫĕ ман ума. Йĕрет.

— Мĕн пуҫĕ? Упăшка хĕнери мĕн, тетĕп.

— Вилҫ... Упăшкам вилҫĕ, тет йĕрсе.

— Мĕнле вилҫĕ? Ара хаҫ анҫах...

— Ерех ĕҫсех вилҫĕ... Тухтăрсем касса пăхрĕҫ те... ăшĕнҫен ерех тухрĕ. Кăтартамха сана. Шкапрахҫĕ.

Шырарĕ, шырарĕ вилĕ ҫын ăшĕнҫен кăларнă ерехе, тупаймарĕ. Пуш кĕленҫесем анҫах.

— Кам, мурĕ, ĕҫсе кайнă?

— Еп ҫав шкалĕк... мĕне... кĕленҫи ăшĕнҫе ерех тупса ĕҫрĕм.

— Старик вилли ăшĕнҫен кăларнă ерехе ĕҫнĕҫ ес? Кӳпсе вилменскер тесе йаҫĕ карҫăк.

Ҫакна илтсен тапратрăм хăсма. Виҫ-тăват сехет хăсрăм.

Ҫавăнтан вара ерех шăрши сăмсана кĕрсенех хăсма тапрататăп. Пăрахрăм ĕҫме. Микул турă пулман пулсан, пайан кун та ӳсĕр ҫӳремелле, терĕ Ҫитăр Васли.

— Ман тупасҫĕ ăна ҫав вилнĕ ҫын ăшҫиккинҫен кăларнă ерехе, терĕ кăҫал ĕҫесшĕнех йулашки ĕнине сутнă Иакур.

Ун пек ерехе тупас текенсем нумай пуҫ те, анҫах... телей кирлĕ ĕҫке...

МАМИ.

В Ĕ Ҫ К Ĕ Н.

Кĕтерин патне карăм та,
Вăлта кĕтсе тăмарĕ.

Тари патне карăмта,
Вăл та тарса пытанҫĕ.

Мари патне кайрăм та,
Вăл та майлă пулмарĕ.

Кулинапа лартăм та,
Вăл та кулса лармарĕ.

Унеҫҫипе утрăмпа,
Вăлта утма пĕлмерĕ

Хайки майхи пулмасан
Тем тусан та Таĭан пур.

ЙĔПЛĔ-ҪĂВАШ.

„Ҫ У Т Ă“.

Турхан-касси (Шуп. у.) ҫиркӳне аҫа ҫапнă. Ҫиркӳвĕ пĕтĕмпех, турăшсем мĕнĕпех ҫунса кайнă.
(„Канашран“).

Ишекри Микул турă сăнне тийакканĕ вăрттăн кăсйине ҫиксе килнех илсе кайнă.
(Малай кореспотент).

— Турă ҫук, теҫҫĕ. Ăҫтан вăл ҫук пулĕ пур ҫинҫе. Турă ҫук пулсан, еҫĕ те пулас ҫук, арăм та, аҫам-пăҫамсем те пулас ҫук, мĕншĕн тесен пире турă тунă, ҫын мар, терĕ Петренкке ҫейник хупăҫҫине илсе ҫейник ҫумне шак-шак шак! шаккаса.

Ҫей параканни, уксахокер, уксакласа пыҫĕ те, сывă ури ҫине тăрса пире тата мĕн кирлĕ пулни ҫинҫен ыйтрĕ. Епĕр:

— Укҫа тӳленĕ-тӳленех—тепĕр ҫейникне пар, терĕмĕр.

Вăл пирĕн ҫинелле ҫăр пăхса илҫĕ те ҫĕре лаҫ сурҫĕ. Ел те ун ҫинелле сивĕрех куҫпа пăхрăм. Вăл вара пуш ҫейнике ик аллипе йарса тытрĕ те, уксахласа пире ваҫҫи ҫей хуранĕнҫен тăватăмĕш ҫейник ăсса илсе пирĕн ҫĕтĕк пир сарнă сĕтел ҫине лартрĕ.

Ҫей куркисене тултарсан, Петренкке каллех турă пурри ҫинҫен калама тапратрĕ.

— Турă ҫук пулсан ҫутă та пулмасĭ. Сĕнтĕр-Вăрривҫен инҫех мар Турхан-касси йатлă ҫирĕклĕ йал пур. Нумайах пулмасĭ, турă хăй хăватне ҫутă туса кăтартас тесе, ҫав Турхан-касси ҫиркӳне аҫа ҫапса ҫунтарса йаҫĕ. Еҫĕ ҫапла пулнă:

Ҫиркӳ хĕресĕ ҫине усал хăпарса ларнă. Турăран кулкаланă пулмалла. Сасартăк вайлă, аслатиллĕ ҫăмăр тух нă та, ҫиркӳ хĕресĕ ҫинҫе урисене айалла йарса хӳрисемпе выҫаса ларакан шуйтана шатăртах аҫа ҫапнă. Шуйтанĕпе пĕрле ҫиркӳвĕ те ҫунса

ХУЛИКАН.

Пурăннă, тет, тĕнҫене шăршлантарса пĕр Хуликан йатлă етем Хайарскер. Вăл ирĕке йуратнă... хăй ирĕкне. Вăрҫасса вăл пит йавăр сăмахсем каласа вăрҫнă... амĕш йаҫĕсене каласа. Темиҫе хутлă сăмахсем каламасăр унăн ăш каннăн туйăнман.

Ҫын ҫ'ри патнех йарса пынă хăйĕн сăмахĕсене.

Хĕлхĕрлĕ хĕрелсе кайаҫ те та-авай маҫ—лама.

Амăшне, кукамăшсене темиҫе хут асăнса илсен, ҫунĕ тан хавасланнă пек пулаҫ. Вăрҫни пит йака тухса пынă.

Пĕрре ҫав Хуликан пухха тухнă краштăн майĕпе.

Пăхаҫ: ҫынсем пурте йĕркеллĕ ларассĕ, сăмахĕсем те пит йĕркеллĕ тухассĕ. Хуликан тухрĕ те:

— Маҫ-маҫ-маҫ, терĕ. Мĕн киҫемĕн лараттăр, шуйтан ҫăпалисем?

— Хуликансемпе кĕрешесси ҫинҫен канашлатпăр, терĕ пĕри, ҫамрăкраххи.

— Хулика-анпа?! Ах, маҫ-маҫсем! Ман ҫышка сурса йĕпетсен миҫе пăттуртассине пĕлеттĕри, шуйтан майраки тĕлне пулманскерсем!..

Мăн ҫышкине ҫăмăртарĕ те, ҫынсем йенелле сулса йаҫĕ.

Милитсионер курҫĕ те тытрĕ ҫышкинҫен.

— Мĕн ес хуликанла ĕҫ тăватăн? Курни ҫакна?

Кăсйерен хăй ҫышкине кăларҫĕ. Мăн ҫышкă. Хуликан ҫышкинҫен темăвăрах.

— Сана мĕн? Еп, вĕт, совета хирĕҫ каймастăп.. совет майлă... Ирĕке йуратаҫăп.

— Вăт ҫавăнпа та йурамаҫ. Хуликанла ĕҫсем тума ирĕк ҫук. Халĕ свобогă!..

Тĕлĕнсе хытсах карĕ Хуликан:

— Нимĕн тума та ирĕк ҫук. Респуплĕки ку! Тĕп сачайĕнҫи пек пурнас пулаҫ. Кăна пĕлнĕ пулсан анне хырăмĕнҫен те тухмалла марҫĕ...

ИЛСАРАЙ.

кайнă, туррисем те йулман. Ҫутă пулҫĕ ку. Турă ҫук пулсан ҫиркуве аҫа ҫапса ҫунтармĕҫĕ. Мухтав сана, туррă. хăвăн хăватна кăтартнăшăн!

Петренкке, сăхсăхма ҫтесе, сылтăм аллине ҫамки патнелле илсе пыҫĕ те, анҫах кĕтесре турăшсем пулманнине кура аллине лăштах йаҫĕ. Унган кхи текелесе ҫей куркине аллине ҫавăрса тытрĕ, тутисене унпăлатса кашни сыпмасренех унки витĕр вĕри ҫей ҫине вĕрсе, куҫĕсене ҫармакласах ĕҫме тапратрĕ. Куркири ҫейне ĕҫсе пĕтерсен турăх ҫинĕ ҫухнехи пек, тутисене шăлса илҫĕ те какăркаласа тепĕр куркка тултарса лартрĕ.

Турра ĕне нмен наукка аҫа ҫапнинҫен хăтăлмалли йапала шухăшласа кăларни ҫинҫен каласа старика ҫиллентермерĕм.

— Вăт, терĕ каллех Петренкке аллисемпе сухалĕсене шăртласа.—Ишек ҫиркунҫе, Микул турă патĕнҫе, тепĕр ҫутă пулнă. Ишек тийаккăнĕ ăшне шуйтан кĕрсе кайнă та, илĕртме тытăннă. „Вăрла та, вăрла, тет, ҫав Микул турăн сăнне. Кайран икконине илсе, ҫĕмпĕр кĕпĕрнери ҫăвапсем патне кайса: «Микул турă кунта куҫрĕ» тесе ҫўре. Вара сан пата Ишеке пынă пекех халăх пыма пуҫлĕ. Вăг сана вара тоххот! Иехрем хуҫа пулса кайăн. Шушкă ҫисе аҫҫах пурăнăв, тет шуйтанĕ кунĕн-ҫĕрĕн сулахай хăлхи ҫине тухса ларса.

Тийаккăн шухăша кайаҫ. Ҫĕр ҫывăрмасăр шухăшлаҫ. Ҫăкăр та ҫимест, майрипе те... каласмаҫ.

Пĕрре Ишекри ерхелей ҫиркўре кĕлтуса пĕтерсен, халăха Микул туррине ҫуптутарнă хыҫҫăн икконине ҫав усал йернĕ тийаккăна кайса хума хушнă. Лешĕ, халăх ҫинҫех ларакан шуйтан илĕртнипе, кайса хурас вырăнне, пĕҫĕккĕскере, кăсйине персе ҫикнĕ те, килелле вĕҫтернĕ. Пупĕсем кайран пăхкаласҫĕ, пăхкаласҫĕ. Ҫук. Ҫук Микул турă. Ҫутă!

Ырра мар.

— Микита, есĕ çав Устинине ҫăнах питĕ йурататăн и çак? Иртнĕ уйăхсенҫе кашнă каçах ун хыççăн ҫупатăн та, çавăнпа пĕлес килетçке-ха?

— Ех, Çитук, йуратасси каҫки кăшт ĕлĕкрех питĕ йурататтăм. Ҫăнах-та унсăр пурнас та килмесҫĕ. Халĕ...

— Мĕн халĕ?

— Халĕ пакки пысăклана пуçларĕ те, курас та килмест.

— Е-е-е, хаҫ апат çинĕ пирки хырăма карĕ пулĕ, хĕрарăм мăнтăрри килĕшет теççĕ çке?

— Çук. апла пулĕ те.. кун хырăмĕ кăва пысăкланаť, сăбĕ шуралсах пыраť...

— Е-е-е, еппин ырра марах.

— Тоттă, халĕ тухса тарма килет...

— Ăмта. АТТАИ.

100%.

— Пирĕн крушока çӳрекенсем йулашки вăхăтра нумайланҫĕç. Пĕтĕмпе 100% хушăннă.

— Суйатăн пуҫ.

— Тупата. Крушокра малтанах пĕр çын ĕçлетҫĕ, халĕ 2 çын пулҫĕ.

Пит ҫейе.

— Утатти, кӳрка 3 хут ҫуп туса илем.

— Ай-ай ҫейе есĕ? Ҫуп тăвас пулсан 3 хут ҫуп тăвастăн, авланастăн пулсан 1 хут та пулин авланса йарасшăн мар.

Микул турă ларнă вырăн çинче пăхса молепĕн кĕлли те туса илнĕ. Çӳпĕ ăшне кайса кĕмени тесе, сторăшне темиçе хут та урай шăлтарнă. Хунарпа кайса ҫан çапмалли çине те хăпарса пăхнă. Пăхмасăр нимĕн те хăварман—ерхелейĕн алтарте лармалли пукан айне те пăхнă. Çук Микул турă.

Йулашкинҫен, çветтуй сывлăш хăваҫĕпе, пĕр ӳсĕр пулнă пирки кĕлле вăхăта çитме ĕлкерейместĕр халĕ тин ҫиркӳвĕ пынă çылăхлă çын ăшне турă анкĕлĕ кĕрет те, икконине кам вăрлани çинҫен ырă хыпар пĕлтерет.

— Тийаккăн вăрланă пуҫ. Хаҫ анҫах вăл мана хирĕç тухса тарҫĕ. Кăсйине тытнă. тет ӳсĕрскер çветтуй сывлăш хăваҫĕпе хăватланса.

— Апла пулсан ҫуп, Çемен Вăççилҫă, тет ерхелей.

Çемен Вăççилҫă турă хăваҫĕ пулăшнипе, пит хытă ҫупнă. Пыраť те тийаккăн патне, шырама тапратаť. Микул турра кăсйинҫен туртса та кăлараť.

— Тийаккăнах вăрлавă.

Тумтир аркинҫен тытса тийаккăна турă хăваҫĕпе ҫиркӳве илсе пыраççĕ.

— Ма вăрларăн? теççĕ.

Вăл тӳрипех, ним тунмасăрах:

— Шуйтан илĕртрĕ. тет.

Çапла çав. Ҫутă вăл çавăн пек пулаť, терĕ Петренкке ҫутăсем çинҫен каласа пĕтернĕ хыççăн.

— Кашни вăрă тытмассерен ҫутă пулаť и вара, терĕм те, старик нимĕн те ҫĕнмерĕ.

Ҫейникри шыва какăра-какăрах ĕçсе йарсан, ҫей параканине 20 шер пус тӳллесе ҫейнинҫен тухрăмăр.

Çĕр уйар. Тӳлери çăлтăрсем хĕвел çинҫе выртакан кĕленҫе ванҫăкĕсем пек йалтăртатаççĕ.

— Ишек ҫаркӳ çине çăлтăр анмалла тесе пуплеççĕ. Йевангкĕлире те çапла каланă тет, терĕ старик ал парса.

— Пилĕк кĕтеслĕ çăлтăри? терĕм те Петрĕнкке манран сăхсăхсах тарма пуçларĕ. ИАВАН-МУҪИ.

ЙАЛСЕМ ТĂРĂХ.

(*Çĕнĕ йурăсем*).

Пирĕн йалсем ытарма çук,
Ытарма çук—хĕвел пек,
«Капкăн»ран вим пытарма çук
«Капкăн», тесе, çĕвер пек.

Асран каймасĭ кĕлеми,
«Капкăн» пуснă кĕлеми.
Халăх çине тухма намăс:
Çам каçивт̧е «намăс», „намăс".

Хĕвел çўлте йалтăр-йалтăр,
Йалтăр-йалтăр çутатаĭ;

Хĕвел пекех пулмасăр,
Кулмасăр та кам т̧атас?

Кулсан пулсан, пулнă майпех,
Йĕрсе ахлатсах йарăн;
Иалĕ пулнă мăшкăл айнех—
Хăшĕ путнă пит тарăн.

Иалти йатлă пуçлăхĕсем
Саккун çине лат̧ сураççĕ;

Вулăссент̧е, Хутарсент̧е
Еп Тротски текен пулаççĕ

Кун пек «Тротскисемпеле» те
Йĕссем каймĕç инçекех.
Кут̧турлансах пыраскерсем
Йалсем йулĕç тĕттĕмсех.

КОППЕРАТТИВА ЛАРТАÇÇĔ.

Тӳнеççĕ çав ахаҫрен мар
Иалти копператтивсем

Ҫухăн çине утлансах
Ларас ҫасгнăй сутăççем

Ахаҫрен мар кĕперĕсем
Татах аннă йăтăнса;
Утă кӳрсе килекенсем
Тăрас пĕççе шарт çăпса
(Малалла пулаҫ).

КАЛАМПИ.

ПАМЕТНИК.

— Хăш шуйтан çĕлĕкĕ ăшĕнҫе пурăнаĭши вăл претçетатĭĕл пулма йурăхлă тӳрĕ çын, тесе йаҫĕ пĕтĕм халăх ревиçи комиççи отҫотне итленĕ хыççăн.

Пухăва пынă Сĕлтĕрме çыннисем пур те шухăша карĕç,—пĕрпĕрин çине ҫăр пăхса илҫĕç.

Копператтив претçетаттĕлĕ Иекур Шуликкăв сĕтел умĕнҫе măшласа çеç тăраĭ.

— Кирек мĕн тăвăр. Еп унта аййапла мар, тет. Çĕрле вăрăсем пыҫĕç те, вăрласа карĕç. Епĕ мар вăрлакани.

Çав вăхăтра Хура Павăл сăмах калама ыйтрĕ.

Шăп пулҫĕç. Тапратрĕ Павăл калама:

— Ылтăн пек хаклă йулташсем! Хамăрăн копператтив укçине салатакансене пĕтерес тесен, ман шухăшпа çакна тумалла. Хуласенҫе ырă ĕç тăвакансен йаҫĕпе паметник лартаççĕ. Епĕр те памĕтник туса пăхăпăр, авҫах тӳрĕ ĕçлекен çын йаҫĕпе мар, растраттă тăвакансем йаҫĕпе. Вара растратҫăксене ĕве ҫĕлхипе çуласа пĕтернӗ пекех пĕтерĕпĕр, тесе хуҫĕ.

Халăх пăлхавма пуçларĕ:

— Мĕнле апла? Апла тусан растратҫăксем татах нумайланса кайĕç. Ухмаха йертĕн-и мĕн, теççĕ.

— Пĕлмесĕр ан лĕпĕртетĕрха, терĕ Павăл йĕрипен. Кулса каламастăп. Ак кунта паметникăн планне те ӳкерсе килтĕм. Çĕр çывăрмасăр шухăшласа лартăм. Пит лайăх памĕтник.

Мишавай пек хăйĕн сумккинҫен пысăк хут кăларса пĕтĕм халăх умне уçса хуҫĕ.

Пăхатпăр: хуҫĕ çине пысăк лахаҥ ӳкерсе хунă.

— Мĕнле паметник? Лахаҥ-ç ку, терĕмĕр.

— Лахаҥ çав, терĕ пĕр иккĕленмесĕр Павăл. Хулара уҫрештенисенҫе, тата ҫаплăрах урамсенҫе сурҫăк сурмалли, çӳп çап пăрахмалли лахаҥсем ларта ларта тухнă, вырăсла вĕсене плеваттĕлнитсă теççĕ. Ват çак лахаҥа та епĕр урам варрине лартăпăр. Лаханĕ çине çапла çырăпăр: «çак лахаҥа Иекур Шуликкăв йаҫĕпе лартрăмăр».

Çыру айне Иекур Шуликкăв сăнне кĕртсе хурăпăр, тата вăл мĕн ҫухлĕ халăх укçине вăрлани çинҫен те пĕлтерекен хăма татăкĕ çыпăçтарăпăр. Вара урампа иртсе кайаканнисем пурте çав лахаҥ çине сурмасăр иртсе ан кайҫăр. Растратҫĕк çине сурнă пек пултăр.

Иекур çакна илтсен пĕтĕм ӳт-пĕвĕпе ҫĕтрезе карĕ.

— Йулташсем, тет, ӳкĕнетĕп, шуйтан илĕртрĕ, ҫăн ҫăнах халăх укçине вăрларăм. Урăх апла тăвас çук.. Ун пек памĕтник тархасшăн ан лартăр. Пĕтĕм илнĕ укçине кайалла кӳрсе парăп. Каçарăр, терĕ ҫăркуççи çине тăрса.

Вара йалсовет:

— Йулташсем, терĕ. Иекур укçине калла кӳрсе параĭ пулсан, ун пек памĕтник лартсах намăслантарар мар пĕреллĕхе. Малалла растраттă тăвакансен пулсан памĕтник лартсах хисеплĕпĕр, терĕ.

— Йураĭ, йураĭ!—терĕ халăх, пĕреллĕхе каçарас!

Ку ĕç йанвар уйăхĕнҫе пулваҫĕ.

Халĕ—авкуст.

Çак çиҫĕ уйăх хушшинҫе çав копператтивра пĕр растраттă та пулман. Памĕтник лартса намăслантарасран пур те хăраççĕ. Ĕмĕрлĕхе пулаĭçке.

М.

МА ВАСКАС?

Йалкорсем пĕлтернĕ тăрăх пур çĕрте пекех пушар хатĕрĕсем йапăх. Йусас текенсем сахал.

(„Канашран“).

— Мĕншĕн есĕр пушар машшинисене йусама тытăнмастăр?

— Мĕв? Ăçта пушар тухри мĕн?

— Пушарĕ çук та ха.

— Мĕн тата?

— Пушар хатĕрĕсене йусама кирлĕ.

— Пушарĕ тухмасăрах мĕн тума йусамалла.

Ҫылӑха кӗртрӗҫ.



Ҫылӑх каҫартаракан. Ҫылӑхлӑ епӗ, пађӑшкӑ ҫылӑхлӑ. Типӗ тӗрӗс тытаймарӑм. Ӳг ҫирӗм.

Пуп. Ҫылӑх, пысӑк ҫылӑх!

Каҫртаракан Ел айӑплӑ мар унта. Кооператтив айӑплӑ. Пулӑ илтӗм те, пулли хуртлӑ пулђӗ. Хурђӗ мӗнӗпех ҫирӗм.

Кайалла венђет туни.

Ђиркӳре венђет туса пӗтернӗ. Пуп кађђинђен укҫа ыйтать.

Кађђи пилӗк тенкӗ парать.

— Сахал, тет пуп, вунпилӗк тенкӗрен кайа илместӗп.

— Епӗр ђухӑн ҫынсем, тет кађђи, урӑх параймастӑп.

— Параймастӑн? Апла пулсан тавай, тийаккӑн, кайалла венђет туса йарар. Ҫӳретђӗр, айвансем, венђетсӗр.

Тумтирсене тӳнтерле тӑхӑн.

— Пирӗн турӑ йаланах мухтавлӑ мар...—тапратрӗ пуп.

— Ырӑ кӑмӑлпа турра ан кӗл тӑвар... тесе мӗкӗрсе йаđӗ тийаккӑнӗ.

Кађђипе хӗрӗ нимӗн тума та пӗлмеҫҫӗ.

— Арӑмсем, упӑшкусене пӑхӑнса ан пурӑнӑр. Исайиа ликуй мар... тесе йаđӗ тийеђукӗ каđака сассипе.

Пурте хӑраса ӳкрӗҫ. Кађђи хӑвӑртрах укҫа хутасси вӑларать те 15 тенкӗ шутласа илсе пупа тыттарать.

— На, кӳп.

— Таксанах ҫапла кирлӗ. Пӗтӗм венђет кӗллине кайалла тунӑ пулсан авланаймастӑнђӗ, тет пуп укҫине кӑсйине ђиксе.

Ҫылӑх каҫарнӑ ҫӗрте.

Пуп умӗнђе пӗр пӗђӗк ађа тӑрать. Унталла кунтала пӑхса ыйтать вӑл ађаран:

— Аҫупа аннӳ калаҫнисене итлетни?

— Итлемен.

— Ђиркӳве ҫӳретни, тура пуҫҫапатӑни?

— Ҫылӑхлӑ, паđӑшкӑ.

— Типӗ тытатни?

— Типӗре ђӑкӑт вӑрласа ҫирӗм.

— Паđӑшкасене хисеплетни, вӗсенђен кулмани?

— Кулкаланӑ.

— Пӗрпӗр йапала вӑрламани ес?

— Вӑрлакаланӑ.

— Апла пулсан пӗлместӗн-и кам йӗнер ман пахђари улмасене вӑрланӑ?

— Елӗ паđӑшкӑ.

— А-а! Есӗ-и-ха! (Хӑлхинђен туртса) Ак, сана, ак сана, вӑрӑ!..



„Веҫҫĕр“.

Веҫҫĕр тесен вырăсла: каҫ тени пулаҫ. Ҫăвашсем каҫа каҫ теҫҫĕ, тата ҫынна карта урлă каҫнă ҫухне каҫ теҫҫĕ.

Метиксантрут сойусĕ веҫҫĕр туса ирттернĕ. Ку веҫҫĕр, каҫах пулнă, анҫах урăхла каҫ. Ку каҫра, витри витрипе сăра ĕҫсе тата 40 вратуслине витри витрипех профсойус ҫленĕсем „хыпнă“. Ҫамрăксене, ерех ĕҫме вĕренҫĕр тесе, пуҫран тытсах ĕҫтернĕ. Хĕрарăмсене те ĕҫме ҫўреме вĕренҫĕр тесе, питĕ хытă ĕҫтернĕ. Вара профсойус ҫленĕсем хăшĕ-хăшĕ урайнех ӳксе, вырта ҫывăрнă, хăшĕ хăшĕ Шупашкар хулинҫе ҫывăрнă.

Ҫаплă каҫ, карта урлă каҫни мар.

Натакка.

Пасарта.

Йалти хресҫе сем метр виҫипе вĕренсе ҫитейменха. Вĕрентес пулаҫ.
(Йалкор).

— Мана пĕр метгăр кăтасси турттарса пархалĕ!

Усламҫă:—Епĕ кăтассине метгăрпа сутмастăп... килокрампа анҫах!

— Ентĕ пĕлсе пĕтерейменĕрĕм, метгăр и киршлеккрамми... виҫ еппин пĕр кĕренкке киввипе.

Корнастай.

Анҫăклă майра.

Прокурор помошнĕкĕ арăмĕ ĕлĕкхи хуҫа майрисем пек урампа ҫўренĕ ҫухне анҫăксăр ҫўреймест. Анҫакне сăнҫăрпа кукăрса ҫавăтса ҫўрет. Каппа килĕшмест пек.
(Ĕҫкор).

Хресҫен: Пĕтрĕ самана! Ку Иехрем хуҫа хĕрĕ пулĕ! Мĕнле килнĕ вĕсем? Анҫăкĕ те пур, сăнҫăрĕ те пур...

Майри: Ку манран тĕлĕнет пуҫ. Улпут майри тет пуҫ. Тĕлĕнмеллийех ҫук, улпут майринҫен те кайа мар: туххисем, сарсем, анҫăксем, мĕнĕсем. Пĕтĕм хула илем манăра!..

Сутра.

Сутйа. Ну, мĕн калăв? Иванов лашине ес вăрларăни?

Айăпланакан (нимĕн те ҫĕнмест).

Сутйа. Ма ҫĕнместĕн?

Айăпланакан Сăмах сала кайăк мар, тухса кайсан тытас ҫук, тетĕп.

Ыйткалакан.

— Мĕн йĕрĕнтерсе ҫўретĕн. Ыйткаласа ҫўреп, тет,—хăйĕнҫен сăмавунккă шăрши перет.

— Сăмавункка шăрши кĕмесен мĕн шăрши кĕтĕр ĕнтĕ пиртен. Хаклă йышши ерехсем ĕҫейместпĕр...

Пилӗк ђервонӗс.

Пупа кӗме пит те ҫӑмӑл иккен. „Ђашлама сырай:

Суйкин йалӗнђе (Шамккай вул.) пӗр хресђен, Никкитӑ йатлӑскер, Улатӑрги ерхелей патне кайса 50 тенкӗ укҫа парса пупа кӗнӗ, тет.

Хаклах мар. 100 тенкӗ парсан ерхелейе те кӗме пулай пуђ, 200 тенкӗ парсан митрополита... Вҫаткӑ тем те тӑвай.

Ҫӗнӗ уйрӑм.

Нурӑс вулӗҫтӑвком сотрутнӗкӗ Ҫитӑр Карађэм Хӗлӗпӗ вулӗҫтӑвком ҫумне ҫӗнӗ уйрӑм уҫнӑ—айак пӗрђи сумалли.

Пасар кунӗсем ӗҫсе ӳсӗрлсе, урам тӑрӑх вулӗҫтӑвком патнелле пыракан сынсене тӗл пулсан: сторониҫ, петнотта, йа сам копешни ђеловек, тесе ҫухӑрса ҫӳрет. Ҫаннисене тавӑрнӑ. Ҫак Хӗлипӗн помошнӗксем пур. Унтрушккӑпа Атам Петри, тет „Ҫӑпата".

Мӗн тӑвас ку Атам ывӑлӗсене? Ҫӑпатапа ҫапас пуҫӗсенђен—хӑрамӗҫ. Хуликан отретне йарас.

Упа.

Мӑрат вулӑсӗнђе (Патӑрйел у.) упасем нумай. Паллах ӗнтӗ—вӑрманлӑ вулӑс.

Йӑвашкӗл йалӗнђе Иекур Петӗрӗпе Иекур Ипукӗ ҫӗрле, ҫурҫӗрте, Кавӑрле Мађукӗ тенӗ 17 ҫулхи хӗре урамра ларнӑ ҫӗртен вӑрласа кайнӑ. Вӑрласса Иекур Петӗр вађђи арӑм тума вӑрланӑ. Мађукӗ Петӗр патӗнђе нумай пурӑнман, 4 кун пурӑнсан амӑшсем патне тарнӑ, тет Венерӑ кореспотент.

Тармасӑр. Упаран тараҫҫӗ, анђах каҫҫа кайас вӑхӑт ҫитмесӗрех мӑшкӑл тунӑшӑн вӑл упана тытма кирлӗ. Тытсан ашӗ те пулай. Упа ашӗ тутлӑ, теҫҫӗ.

Хӑрӑм.

Иулашки вӑхӑтра услӑмҫӑсем пит ђейеленсе карӗҫ. Хӑш-хӑш ҫӗрте вилнӗ аша ђӗрӗ тесе сутаҫҫӗ, хӑш ҫӗрте тата кӗленђе ӑшне сарӑ шыв йараҫҫӗ те, аҫа пӑрахтармалли емел тесе сутаҫҫӗ Теприсем тата:

Ӗсмел—Тукай пасарӗнђисем, кӗпе-йӗм кӑвакартмалли сӑрсене хӑрӑм, йе тата урӑх йапаласем хутӑштарса сутаҫҫӗ. Пасарта хутӑштарман сӑр ҫук Хӑрӑмпа хутӑштарнӑ сӑрсене мӑскалне 10—15-шер пуса сутаҫҫӗ, тет Савкай.

Хӑрӑм хаклӑскер сирӗн патра. Шупашкарта йӳнӗ. Мӑрйе тасатакансем йӳнех параҫҫӗ. Тата епӗр тӗрме мӑрйисенђе хӑрӑм нумайи ҫинђен илтнӗђӗ. Унтан та илме пулай.

Вӑрласа пуйакан.

Вӑрламасӑр пуйаймӑн, теҫҫӗ. Ав,

Ђӑрӑш-Туҫари (Шӗнерпуҫ вул.) арман хуҫи Алексей Павӑлђӑ авӑртма пынӑ тырӑсене вӑрлай. Пуйма шухӑшлай пулмалла. (Савкай).

Пуйасси пуйӗ те, анђах, йумахра пуйма кайсан вилсе килӗн тенӗ пек, вӑрласан пуҫа ҫимелле ан пултӑр. Пуҫне ҫимесен те, тӗрмене лекет-лекетех. Унта йӗрӳ те, шӑл шатӑртаттару та пулӗ.

Сысна пирусӗ.

Пӗри Сӗнтӗр вулӑсӗнђен ҫырай:

„Хура ҫырма йалне пӗр хура сысна йерсе килнӗ. Ҫав сыснана халӑх пуҫтарӑнса тытрӗҫ те сутрӗҫ 4 тенкӗ те 50 пуса. Укҫипе пирус илсе туртрӗҫ", тет. (Ҫӗнӗ сын).

Сысна ашӗ пит тутлӑ ӗнтӗ, сысна пирусӗ мӗнлеши? Тутлах пуђ. Тутлӑ пулмасан сутас та ҫук. Тӗтӗмӗ те хӑватлӑ пулмалла—«Капкӑн» кӗнђелеринех пырса кӗнӗ.

Çутта кăларакансем.

Иртнĕ уйăхра Хутар вулăсĕнҫе (Иетĕрне у.) уҫиглĕсен сопранийĕ пулса иртнĕ.

Паллах ĕнтĕ: сопрани тенинҫе хĕрўллĕ сăмахсем, тавлашусем... тем те пулма пултарать. Ку сопрани те çав-семсĕр иртмен. Кирлĕ ыйтусем сўтсе йавнă, ҫылай шухăшласа ларнă, хăшпĕрисен, хĕрўллĕ сăмахсем каланă хыççăн, çамкисене тар та сиксе тухнă. Çапла шут туса ларса сопранийĕ каçҫен тăснă.

Сопрани пĕтсен, хăшпĕрисем киле уттарнă, теприсем, сопранире пиçĕхсе ларса ĕçес килнипе, палланă çынсем патне ҫей ĕçме кĕнĕ. Сопранире активлăрах ĕçленисем Çăпата Кĕркурипе Маймассăв Хутарах йулнă. Кăсем çумве вулăс акрономĕ Троитски çыпăçса кайнă.

— Тавай пайан сыпар, ĕç тунă хыççăн шăмпакка çемçетме кирлех, теççĕ.

Каланă—тунă. Шкул сторăшне копператтива руски корки патне ҫуптараççĕ. Лешĕ персе килет.

Малалла ĕç хăй майпех шăвать. Кĕленҫесене сăрăхтараççĕ кăна... шăлт та шалт çавăра-çавăра хураççĕ. Руски корки хăй ĕçнех тăвать: кашни сыпмассерĕнех вăл пуç тăнне пĕтерсе пырать.

Ĕçсе тăранҫĕç. Шăмпак çăмăлланса кайрĕ. Сиккелеме пуçларĕç. „Спорт" вăйне выҫама шкул пахҫине кĕрсе кайрĕç. «Вăйă» пуçланҫĕ. Троитски Çăпата Кĕркурине йанк! анҫах йанахран тыттарса йаҫĕ.

— Ай уй!.. сын айне пуласи... йанк! каллах Троитски пуçĕвҫен.

— Ҫеп! Маймассăв çурăмне.

Ака ĕç пуçланса кайрĕ. Аманасса та пĕлмеççĕ!..

Пĕр-пĕрин кĕпи-йĕмĕсене веç çурса пĕтерҫĕç. Çара пакартанах ĕçлеççĕ.

— Ака çпектаккăҫ, вот арттисем ăçта, тесе тĕлĕнеççĕ куракансем.

„Вăйă" ресуҫтатне пĕлес тесен, çапла пулать: çийеле вихăшĕ те тухайман, пурне те пĕр тан тивнĕ: çамкисене кашнийех „сваҫҫоксем" çыпăçтарнă, упитки акрономĕн пысăкрах: 50—60 тенкĕ тăракан тумтир çĕтĕлсе пĕтнĕ, çитменнине йĕмне çурса намăс вырăнҫен ҫавса илнĕ, сывалма ыттисенҫен расхуг нумайрах тухмалла.

Тепĕр ирхине пăхаççĕ: кĕпе йĕмсем вырăнта çук, пахҫара татăкĕсем çеç выртаççĕ. Шкул сторăшне кĕпе-йĕм ваҫҫи маттери илме каллех копператтива ҫуптараççĕ. Çўçĕ тупса çĕлетсен тин киле тухса кайаççĕ.

Ну, çутта кăларакансем, «ĕç» тума пултаратăр çав!... Милетси курса тытса хупасран та хăрамастăр.

Пайраш.

Кулаҫă йуратакан.

Кулаҫă çийес тесессĕн кăмака çинҫе выртма йурамасть теççĕ, анҫах кăмака çинҫен аннипех кулаҫă сийеймĕн. Ăста пулас пулать. Ăста кулаҫă çиме пултарать.

Тавăси-касси — Кушкара (Çĕрпў вул.) МОПР йаҫейкки уçнă хыççăн, револ̧утсишĕн кĕрешекенсене пулăшас тесе çпектаккăҫ лартнă. Пилет сутаканни пилет сутса пухнă укçине, револ̧утсишĕн вилнисем умĕнҫе пултăр тесе пуҫ, кулаҫ илсе çисе йанă. Ăста, халăха улталама пит ăста! (Ш).

Ăста пулнăран кулаҫă çинĕ çав! Ун çинҫен уколовнăй росыска пĕлтерес,— вăл та тупас çук кулаҫине, мĕншĕн тесен кулаҫи пилет сутаканнин хырăмĕнҫе таксанах çĕрсе кайнă пуҫ. Тепре ун пек хăтлансан тытăни анҫах.

Каҫҫа кайаспа салтака кайас ĕç.

Çын ăсĕ темĕн те шухăшласа кăларĕ. Текерлек çырать:

Нурăс тавраш̆ĕнҫе (Иетĕрне у.) хăш-хăш çамрăксем салтака кайасран пит хăраççĕ. Кил-йышра ĕçлекенсем пур пирки ҫкоггăсем илме май килмест. Çавăнпа вĕсем, ҫкоттă илес тесе, йăмăкĕсене çамрăклах каҫҫа параççĕ, тет.

Йăмăкĕсене каҫҫа параççĕ-ха... Ĕçе йурăхлă ашшĕ амăшсене мĕнле? Вĕсене каҫҫа парсан та кайас çук. Мĕнле хăтăлĕç вĕсем ашшĕ-амăшсенҫев?

Ӗҫсӗр аптӑранӑ ђухнехи шухӑшсем.

Ђи йӳнӗ, саккун ђарман вҫаткӑ— йӑпӑлтатни. Вӑл вҫаткӑ пур ҫӗре те сарӑлса ҫитнӗ ӗнтӗ.

———

Хӗрарӑм ирӗкӗ ҫинђен йалта калаҫма лайӑх, арӑмпа вӑрҫма килте лайӑх.

———

Кам хӑй ӗҫӗсем ҫинђен калама пултарать, вӑл лайӑх ӗҫлекен шутӗнђе тӑрать.

———

Нийепле йытӑ та хуҫи умӗнђе ик ури ҫине тӑрса утса ҫӳремесӗр сахӑр катӑк тупаймасть.

———

Айван пуҫлӑх та кӑш ђукне пуҫне шухӑшласа илме пултарать (киревсӗр хушу панӑ хыҫҫӑн).

———

Пуҫлӑхран айвантарах пулма тӑрӑшмасан пуҫлӑха йураймӑн.

———

Слушпӑна ҫӳрес килмест те, анђах слушпӑ тени усӑллӑҫке.

КОРЕСПОТЕНТСЕНЕ.

— Карпӑва. Йӑлтӑртатакан йапаласене пурне те ылтӑн темеҫҫӗ. Сан ылтӑн ҫинђен ҫырнӑ сӑвӑсем те ылтӑн шугне кӗреймеҫҫӗ.

— Шишка. Ҫтихсем кӑмӑла карӗҫ. Рифмӑсем, ритмӑсем, ђарӑну паллисене асӑрхаса пыма маннӑ есӗ. Кӑмакана манса йулнӑ ҫӑкӑра ҫинӗ-и мӗн ес?

— Хурлӑхана. «Капкӑн» пиплиоттеккине ҫапса кӑларма ыйтатӑн та есӗ... Темлеха. Укҫа пулсан ҫапса кӑларӑпӑр та и тен.

— Ђанана. Алла перо илтӗм те, поет пулма пултарассӑн туйӑнса карӗ, тетӗн. Иурать. Хӗпӗртерӗмӗр.

— Пур кореспотентсене те. Пысӑк фелйеттонсем ҫырма пултараймастӑр пулсан, пӗђӗк калаҫусем ҫырса йарӑр. Ђӗхӑ пӗђӗккӗн сӑхсах тӑранать.

— Хумана. Мана пуринђен ытла вӑл ваттисем йӑлине мала хуни килӗшет, тетӗн есӗ. Сана килӗшет те, пире килӗшместҫке.

— Мӑшӑра. Те арӑму сана хӗненӗ, те ху арӑмна хӗненӗ? Паллӑ мар. Ӗҫӗ паллӑрах пултӑр тесен, халӑх сутне пар.

— Сухӑва. «Капкӑн» ретаксинђе мана вађђи ырӑн пури, тесе ыйтатӑн есӗ. Пур. Ма ҫук? Пынӑ ҫынсене ларма кирек хӑҫан та тӑрӑхла сак пур.

— Улиттана. Путрӑ ӑҫта сутнине пӗлместпӗр. Пӗрпӗр ответлӑ ӗҫре ларакан арӑмӗнђен ыйт.

Ответ. редактор А. Золотов.

„КАПКӐНА" ЙУРАТАКАНСЕМ!

„КАПКӐН" ПОТПИСЌӖКӖСЕМ ЙУЛАШКИ ВӐХӐТРА САХАЛЛАНЂӖҪ

ҪЫРӐНСА ИЛЕКЕНСЕМ сахал пулсан, «КАПКӐН» ҫӑварӗ хупӑнма та пултарать.

10-ШАРӐН 20 ШЕРӖН пухӑнса, кашнийех „КАПКӐНА" ҪЫРӐНСА ИЛӖР!

„КАПКӐН" ӖМӖР вӑрӑм пултӑр, ун потписђӗкӗсем нумайланђӑр!!!

Чувашлит № 842. Чебоксары, тип. „Чувашская Книга